# «Тăван чĕлхе – хитре чĕлхе» калаçу сехечĕ

***Класс тулашĕнчи мероприяти сценарийĕ***

Мероприяти тĕсĕ: **калаçу сехечĕ**
Ячĕ: «Тăван чĕлхе – чи хитре чĕлхе»
Тĕллевĕсем: 1) тăван чĕлхе чи хитре чĕлхе пулнине çирĕплетесси;
2) тăван чĕлхене юратма, хисеплеме, ăна упрама вĕрентесси;
3) тăван чĕлхене халалланă хайлавсене аса илесси.
Усă курмалли: «Чи хитре чĕлхе» презентаци, «Илемлĕ, илемлĕ…» юрă кĕвви, чĕлхе çинчен каланă цитатăсем, кĕнекесем.
Эпиграф: «Чĕлхе хăйне пултарнă халăхпа кăна вилет, çавăнпа та халăх хăй чĕлхине мантăр тени çав халăха вилĕм суннипе пĕр танах».
И.Я.Яковлев

**Сехет юхăмĕ**

**«Илемлĕ, илемлĕ…» юрă янăрать.**

Вĕрентекен:
- Ырă кун пултăр! Ачасем, паян эпир «Чи хитре чĕлхе» ятпа калаçу сехечĕ ирттерĕпĕр. ***Вăл – пирĕншĕн чĕлхе уявĕ те пултăр!***

Шӳт

**Выляса памалли**

*Класа пĕр хĕрарăм вăркăнса кĕрет, ун хыççăнах арçын ачи.*
--*Мама теп, мама, корова пахча тăрăх пошла, картошкăна таптаса пĕтерет, Алăкне папи закрывать туман.*
--*Мĕн çухăран, сынок! Хăвалаймастăн штоль!? Эп чувашский языкпа иртекен мероприятине сестренку патневаскатăп-иç, сам кайса хăвала, быстрей. Быстрей. Хам ак васканипе мотыгăна та пĕрле илнĕ. Отнеси вырăнне и чтоб эп çитнĕ çĕре пахачари сорняксене полоть туса пĕтернĕ пултăр…*
---*Хорошо, мама, сана итлемеллех, кăçал вĕт Ĕç çыннин çулталăкĕ. (Ачи алăк патне пырать).*
---*Иртсе ларма можно, кăштах опоздать турăм çав, извините.*
*Вĕрентекен:*
*-Ачам, ан кайăр-ха, тăхтăр, сире те кунта чĕнетпĕр.*

Паян эсир те пирĕнпе пĕрле пулăр. Иртĕрех малалла. Шăпах чĕлхе çинчен сăмах хускатасшăн эпир. Эсир мĕнле чĕлхепе калаçнине пĕлесшĕн.

-Сире , ачасем, çак калаçу килĕшрĕ-и? Мĕнле чĕлхепе калаçрĕç-ши амăшĕпе ачи?
-Вырăсла та мар, чăвашла тесе калама чĕлхе те çаврăнмасть.
Ăсчахсем шутланă тăрăх, çĕр чăмăрĕ çинче пĕтĕмпе 5641 ( 6 пине яхăн) чĕлхе. Пирĕн планета çинче халăх ытларах 13 чĕлхепе калаçать.Чи нумай çын усă кураканни – китай чĕлхи. Унпа 1 млрд. çын калаçать. Интернетра хыпарлавсен 81% - акăлчанла (350 млн. çын калаçать), вырăсла – 150 млн. Çулленех вун-вун чĕлхе çут тĕнчерен кайса пырать.

Чи хитре чĕлхе тесе эпир мĕнле чĕлхене калатпăр-ха? Чи малтан чĕлхе наукипе çыхăннă ыйтусем çине хăвăрт кăна хуравласа çак ыйту хуравне те тупăпăр.

**Кроссворд**

| | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| **Т** | ĕ | р | ĕ | к | | | | |
| **Ă** | с | | | | | | | |
| **В** | а | т | т | и | с | е | м | |
| **А** | ш | м | а | р | и | н | | |
| **Н** | е | о | л | о | г | и | з | м |
| **Ч** | ĕ | л | х | е | | | | |
| **Ĕ** | ç | е | | | | | | |
| **Л** | е | к | с | и | к | а | | |
| **Х** | а | л | ă | х | | | | |
| **Е** | | | | | | | | |

1.Чăваш чĕлхи хăш чĕлхесен ушкăнне кĕрет?
2.Сиксе юлнă сăмаха туп. «Икĕ чĕлхе – икĕ…, виçĕ чĕлхе –виçĕ …».
3. «Кайăк хитре – тĕкĕпе, этем ырă – ĕçĕпе». Камсем çапла калаççĕ?
4. 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» авторĕ кам-ши?
5.Чĕлхе наукинче çĕнĕ сăмахсене мĕн теççĕ?
6.Çут тĕнчере мĕн çивĕч?
7.Сиксе юлнă сăмаха тупăр. «Ырă чăваш тупăнчĕ, ырă… тытăнчĕ».
8.Чĕлхери мĕн пур сăмахсен йышне мĕн теççĕ?
9.Чĕлхе вăл кам пуянлăхĕ?
10.Чăваш алфавитĕнчи 7-мĕш сас палли.

**Хуравсем**

1.Тĕрĕк.
2.Ăс.
3.Ваттисем.
4.Ашмарин.
5.Неологизм.
6.Чĕлхе.
7.Ĕçе.
8.Лексика.
9.Халăх.
10.Е сас палли.

## Акă вăл тупсăмĕ! Тăван чĕлхе! Чи хитре чĕлхе!

## Вĕрентекен:

Пин-пин чĕлхе хушшинче пирĕн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи те – ырă ятлă. Унпа çĕр çинче 2 млн. çын калаçать.

**Пирĕн тăван чĕлхе – чăваш чĕлхи. «Тăван чĕлхе» тата «Чăваш чĕлхи» ăнлавсем хушшинче уйрăмлăх пур-и?**

**Ачасен хуравĕсем. Тăван чĕлхе вăл – анне чĕлхи.**

*Виçĕ ыйту –пĕр хурав /Г.Н.Волков В.Г.Егоров профессорпа калаçнинчен/*
*Профессора ыйту патăм:*
*- Хăвăр пĕлекен чĕлхесенчен чи илемли хăшĕ?*
*- Тăван чĕлхе.*
*- Чи пуянни мĕнле чĕлхе?*
*- Тăван чĕлхе.*
*- Чи юратнă чĕлхе хăшĕ?*
*- Тăван чĕлхе.*

*Виçĕ ыйту – пĕр хурав. Пĕр сăмах. Çичĕ ыйту панă пулсан та, хуравĕ çавах юлĕччĕ-ши? Сăмахĕсем пĕрех те, çапах та йăлăхтарас çук çичĕ хутчен каласан та. Аннемĕрĕн çепĕс сăмахĕ-çке, унăн ăшă кулли-çке. Аннемĕрĕн хитре юрри-çке, хÿхĕм такмакĕ-çке, чечен тĕрри те-çке.*

**Тăван чĕлхе çинчен каланă çунатлă сăмахсене аса илесси.**

**1. «Атте-анне чĕлхи – пирĕн тăван чĕлхе. Тăван сăмах, тăван чĕлхе – халăх чунĕ. Унăн паянхи кунĕ, малашлăхĕ. Унсăрăн халăх çук. Пулас ăрăва тĕрĕс пăхса çитĕнтересси чи малтанах тăван чĕлхе хисепĕнчен,чысĕнчен килет. Шкулта тăван чĕлхе – пĕрремĕш предмет». (Г.Н.Волков)**

***2.Чăваш чĕлхи вăл – манăн чун та ĕмĕт,***
***Хĕвел те уйăхăм – тăван чĕлхе,***
***Пуçна чĕлхе пĕтессипе ан çĕмĕр,***
***Вăл халĕ кирлĕ халăха.***
***Пуçра мĕн чухлĕ шухăш санăн***
***Мĕн чухлĕ ĕмĕт хальлĕхе,***
***Сана, ачам,пурне те панă***
***Чăваш чĕлхи, тăван чĕлхе! /Я.Ухсай/***
***3.***
***Кам тăван чĕлхене юратмасть,***
***Вăл тăван амăшне юратмасть.***
***Кам тăван амăшне юратмасть,***
***Вăл тăван халăхне юратмасть.***
***Кам тăван халăхне юратмасть,***
***Вăл Тăван çĕршывне юратмасть. /Петер Эйзин/***

**Пирĕн районта çуралса ÿснĕ П.Метин «Тăван сăмах – чăваш чĕлхи» кĕнекинче чĕлхе çинчен ăслă çынсем каланă йĕркесене пĕрчĕн-пĕрчĕн пухнă. Тĕленмелле сăмахсем!!! Сире те паллашма сĕнетĕп унпа.**

**Ачасен икĕ ушкăнĕ ребуссен хуравне шырать.**

**№1 ребус**
***Тăван чĕлхесĕр чăн-чăн пĕлÿ çук.*** **/И.Я.Яковлев/**

**№2 ребус**
***Тăван чĕлхе – тĕнче ăс-хакăлĕ.*** **/Юхма Мишши/**

**Чĕлхе уявĕсене аса илесси**

**Нарăс уйăхĕн 21 –мĕшĕ – Тăван чĕлхе кунĕ (пур çĕрте те уявлаççĕ)**
**Тĕллевĕ: чĕлхе тата культура нумай енлĕхне сыхласа хăварасси**
/Пĕрремĕш хут 2000 çулхи нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕнче уявланă/

**Ака уйăхĕн 25-мĕшĕ – чăваш чĕлхи кунĕ (1998 ç.)**

**Çухалса кайнă ача амăшне шырать.Унран вăл мĕнлине ыйтаççĕ… «Манăн анне чи хитри», -тет хайхискер. Эсир тăван чĕлхе пирки: «Анне парнеленĕ манăн тăван чĕлхе чи хитри», - тесе калама пултаратăр-и?**

*Кашни ача хăмпă (шар) хăпартать те <u>Мĕн вăл тăван чĕлхе? Мĕнле вăл тăван чĕлхе? Мĕн тăвать тăван чĕлхе? Ыйтусенчен пĕрин çине хуравласа фломастерпа хăмпă çине çырать.</u>*

**Анчах та юлашки вăхăтра тăван чĕлхене хисеплеменни кашни утăмрах тĕл пулать. Çакă пиртен кашнинех хумхантармалла пек.**

**Итлесе пăхар-ха Юрий Сементерĕн «Амăшĕн чунĕ» сăввине.**
**Икĕ ача Стихван Шавлин «Вĕçкĕн Ваçça» юптарăвне вулаççĕ.**

**Çак сăмахсем сире шухăшлаттараççĕ-и?**

**Эпир камсем? Ия, чăвашсемех,**
**Анчах пирĕн ачасем камсем?**
**Ниушлĕ, тусăмăрсем, ĕмĕрлĕхех**
**Тăван чĕлхе ют пулĕ-ши вĕсемшĕн? /Петĕр Çăлкуç/**

**Тĕлĕнтĕм эпĕ пĕтĕмпех,**
**Тăван чĕлхем çĕтрĕ-ши?**
**Е ăна та ман пекех**
**Йытта персе пачĕç-шим? /Николай Ишентей/**

**«Ят хума пултарнă хамăр**
**Хĕвеле, çăлтăрсене…» . Çапла çырать П.Хусанкай.**
**Сирĕн умра – çăлтăрсен чăвашла тĕнчи. Сирĕн вара чăваш чĕлхи кунĕ валли вĕсен ырăсла ячĕсене тупмалла (Килти ĕç)**

**/Шурăм пуç çăлтăрĕ, Вут çăлтăрĕ, Çут çăлтăр, Инне çăлтăр, Уша çăлтăр, Хĕрес çăлтăр, Тараса çăлтăр, Чаппан çăлтăр, Алтăр çăлтăр – çич çăлтăр, Çурçĕр çăлтăрĕ, Хур кайăк çулĕ, Ала çăлтăр, Кĕвенте çăлтăр…**

**Тăван чĕлхе –анне чĕлхи.**
**Цитатăсенчен, чĕлхе çинчен каланă сăмахсенчен «Чечек çыххи» тăвасси.**

**Ку – чĕлхе ячĕпе тунă хăйне евĕр палăк. Вĕсене ялав пек туса алăпа ăсталанă чечек чÿлмекне тултаратпăр.**

**Кластер, синквейн туни. (Мĕн вăл тăван чĕлхе? Мĕнле вăл тăван чĕлхе? Мĕн тăвать тăван чĕлхе?)**

**Тăван чĕлхе**
**илемлĕ, чи хаклă**
**ăшăтать, çунатлантарать, янăрать**
**Пирĕн илемлĕ те янăравлă тăван чĕлхе чи хакли шутланать.**
**Чăваш чĕлхи- анне чĕлхи**

**Хаçат калараcси**

Умри материалсенчен (чĕлхе çинчен калакан тупмалли юмах, ваттисен сăмахĕ, цитатăсем, сăн ÿкерчĕксем, сăвă йĕркисем, стикер çине çырнă ачасен шухăшĕсем) хăварт çеç хаçат кăлараççĕ. *Ячĕ – «Чи хитре чĕлхе»*

**Пĕтĕмлетÿ.**

**Тăван чĕлхене упрасси – пирĕн тивĕç. Епле хитре вăл! Тăванран тăван. Çак чĕлхепе янăракан сăвва-юрра начар теме епле хăяр? Калаçар унпа, упраса хăварар, ачасене, мăнуксене парнелер анне чĕлхине…Чи хитре чĕлхе ĕмĕрех пурăнтăр!!!**

**Чăвашсемĕр! Сире телей сунатăп,**
**Ан сивĕнĕр тăван чĕлхемĕртен.**
**Мансан – чĕлхесĕр янавар пулатпăр,**
**Чĕлхе пулсан пĕтместпĕр ĕмĕрте!**
**(Р.Сарпи)**

**Манăн ĕмĕт:** <u>Кино çулталăкĕнче чăн чăвашла чаплă фильм курасчĕ. Тăван чĕлхен символ пек чĕлхине итлесе киленесчĕ.</u>

**Ачасем хăйсен шухăшне пĕлтереççĕ. Сехет килĕшрĕ е килĕшмерĕ? Тăван чĕлхе шăпи çинчен мĕн шутлаççĕ? Енчен те килĕшрĕ пулсан хутран касса каларнă чĕресене пысăк чĕре çине çыпăçтараççĕ.**

**«Илемлĕ, илемлĕ…» юрă янарать. Ачасем пĕрле юрлаççĕ.**
**«Халăх сăмахлăхĕнчен» -ачасем итлеççĕ.**

## 2 № Хушса пани

## Тăван чĕлхе. Мĕн вăл?

- **халăх палли, халăхăн авалăхĕ, сумлă та телейлĕ малашлăхĕ**

- **анне чӗлхи**
- **атте чӗлхи**
- **тӑвар каснӑ чӗлхе**
- **пылтан тутлӑ чӗлхе**
- **тӑвӑл хумлӑ чӗлхе**
- **хӗҫрен ҫивӗч чӗлхе**
- **культура тӗшши**
- **вилӗмсӗрлӗх тӑмхи**
- **чи хаклӑ пурлӑх**
- **тӗнче ӑс-хакалӗ**
- **асаттесен пилӗ, асаннесен тупи**
- **кукамайсен пехилӗ, кукаҫейсен тилмӗрӗвӗ**
- **анне юрри, атте ӳкӗчӗ**
- **аппа такмакӗ, пичче вӗрентӗвӗ**
- **шӑллӑм тавӗ, йӑмӑкӑн ачашлӑхӗ**
- **хуранташсен, кӳршӗсен ыр кӑмӑлӗ**
- **иртнӗ ӗмӗрсемпе паянхи куна ҫыхӑнтарса тӑракан тем тӗрлӗ эрешлӗ, пиншер тӗрӗллӗ, пиншер чечеклӗ кӗпер**
- **анне чысӗ**
- **тӑван халӑх чысӗ**
- **халӑх хавалӗ**
- **ахах-мерчен**
- **ӗмӗрсем хушши куҫ шӑрҫи пек упранса килнӗ кӑвар чӗлхе**
- **пахаран та паха ылтӑн ҫӳпҫи**
- **сӗм авалтан паянхи куна ҫити упранса юлнӑ нимпе танлаштарма ҫук пысӑк пуянлӑх**
- **пӗрремӗш ӗсӗклевӗм**
- **суранлӑ чунӑмӑн юлашки ҫӗвви**
- **вӗри чӗре таппи**
- **ту пек тулли арча**
- **халӑхӑн асамӗпе илемӗ**
- **халӑхӑн савӑнӑҫӗ, хевти, хуйхи-суйхи**
- **пирӗн тӗрек**
- **пин хӗлӗхлӗ кӗслем**
- **вӗҫӗмсӗр тӗнче**
- **чӗрӗ вӑй, тӗрек**
- **анне юрлан сӑпка юрри**
- **ялан чунра ҫунса тӑран хӗлхем**

- **таса çăл куçĕ**
- **хĕвел шевли**
- **атте ăс-пуçĕ**
- **анне сасси**
- **чĕрери нихçан сÿнми хĕлхем**
- **хăватлă океан**
- **кил ăшши**
- **шăнкăр-шăнкăр шыв**
- **кашни çынна вăй паракан хĕлхем**
- **хĕрлĕ хĕрнĕ хурçă**
- **çунтаракан çиçĕм, вĕри вутлă çулăм**

**Тăван чĕлхе. Мĕнле вăл?**

- **чи пахи**
- **чи ырри**
- **чи хитри**
- **чи чапли**
- **çепĕç те çывăх**
- **вăйлă**
- **хаклă**
- **хисеплĕ**
- **иксĕлми пуян**
- **хăюллă, сисĕмлĕ, туйăмлă, çиçĕмлĕ**
- **тăванран тăван**
- **чи асли**
- **питĕ чечен**
- **çав тери илемлĕ**
- **ачаш**
- **шăнкăр-шăнкăр шыв юххи пек янăравлă**
- **асамлă**
- **ирхи сывлăм пек таса**
- **çырла пахчи евĕр пуян**
- **анне чунĕ евĕр çемçе**
- **çурхи сасă евĕр шăнкăравлă**
- **черченкĕ**
- **вут çулăм пек хăватлă та кăра**
- **кĕмĕлрен те хаклăрах**
- **хĕрÿ те хÿхĕм хĕвелпе пĕр тан**

- **манаçлă, витĕмлĕ, сăнарлă**
- **телĕнмелле çаврăнăçуллă, хăватлă**
- **Атăл евĕр**
- **ĕнентерӳллĕ шухăшлă**

**Тăван чĕлхе. Мĕн тăвать?**

- **хрусталь чечек пек янăрать**
- **вăй парать**
- **ăс-тăна аталантарать**
- **çунать хушать**
- **мăнаçлăх туйăмĕ çуратать**
- **ун витĕр пăхсан çур тĕнчен аваллăхĕ курăнать**
- **ылтăн çăраççи пулса аваллăха çул кăтартать**
- **ӳнерпе культура тымарне чĕртет**
- **çуралать, аталанать**
- **питĕ çепĕç янăрать**
- **çунтарать, тимĕр татать**
- **авкаланать, хуçкаланать çăл куççенчен яхса тăран шыв пек**
- **шăнкăртатса сассипеле вăл ачашлать**
- **сар çу пек чĕре ăшне сарăлать**
- **сăмах хушса аслăланать**
- **çӳлелле  çĕклет**
- **çутатать, хĕмленет, пурăнать**
- **туптанать**
- **çул уçать**
- **кулленхи ĕçре пулăшать**
- **ăшăтать**